Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Алексеев Осип Алексеевич**

**Книга: Ăсан Уçăпĕ сунарçă**

## Рассказ: Хура йытă Айта

Урам урлă пурăнакан Микулай мучирен йытă çури илсе килтĕм. Унăн амăшĕ хура-шурă ула, пысăк. Ку вара кăмака хăрăмĕ пек хуп-хура, пĕр шурă пăнчă та çук, анчах çăмĕ çу сĕрнĕ пек çуталса тăрать. Урисем малти те, хыçалти те ухват пек кукăр: тӳрех паллă, кĕске ураллă йытă пулать. Ун валли чипер ят шыраса тупайманран: «Айта кил, сĕт ĕç», е сунара кайнă чухне «Айта пĕрле, пĕччен çуресен ытла та кичем», − теттĕм. Ӳссе çитрĕ. Вăл кĕске ураллă, анчах пĕвĕпе вăрăм йытă пулчĕ, «Айта» сăмаха хăйĕн ячĕ вырăнне хурсах йышăнчĕ.

Микулай Мучи Çĕрпӳ ярмăрккине кайса тăванĕсем патĕнче тăватă каç выртнă. Йытти те пĕрле пулнă. Кампур Айта ашшĕне çавăнта тупнă пулмалла.

Айта ӳссе çитĕнсен пирĕн пата кӳршĕсем те пыма хăракан пулчĕç Урам алăкĕн çекĕл сассине илтсенех Айта шыва васкакан ăтăр пек алăк умне шăлне йĕрсе вирхĕнсе пырать. Сасси хăйĕн ытти йытăсенни евĕр хам! хам! тенĕ пек мар, çинçен те вăрăммăн хум-хум! тесе каланăн илтĕнет. Çивĕч шăлĕсемпе йĕм пĕççинчен е çанăран çаклатсан çилĕмле çыпçăнса ларать. Сивĕ шывпа сапсан çеç уйăратăн ăна. Çавăнпа килкартинче лаххапа шыв тытма хăнăхрăм. Хĕлле пӳртри шыва йăтса тухатăп.

Пĕррехинче Айта виçĕ-тăватă кун çухалса çӳрерĕ. «Йытă хăйне час-часах шывпа сапнăран мана кӳренчĕ-ши», − теме пуçларăм. Айта ун чухне килтен мĕншĕн тухса кайнине пилĕк уйăхран çеç ăнлантăм: аçа шырама кайнă иккен.

Пĕр ирхине сурăх картин хĕвелтухăç кĕтесĕнче Айта çывăхĕнче виçĕ хура муклашка выртнине асăрхарăм. Йытă вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн тутипе тĕке-тĕке йăвантара-йăвантара çуласа типĕтет. Мана курсан йынăшса сасă пачĕ: «Ачамсене тивмĕн-и?» терĕ пуль. Суккăрсенчен пĕрерĕшне тухса пăрахма та алă çĕкленмерĕ. Чун вĕт. Ӳссен, тен, кама та пулсан кирлĕ пулĕ.

Айта çав кунтан пуçласа картана пĕр чĕр чун та кĕртмерĕ. Юрать-ха вăхăчĕ кĕркуннене сулăнма пуçлани нумаях марччĕ.

Куçĕсем уçăлсан, вăй кĕрсен виçĕ хура муклашка картаран тухса таракан пулчĕç. Ĕне çăмĕнчен йăваланă, çавраш-калансах çитмен мечĕк пек кăлтăртатса чупаççĕ вĕсем.

Çапла тухса çӳренĕ хыççăн тăватă-пилĕк кунтан çурасем, тем сиснĕ пек, картана таврăнмарĕç, амăшне туса панă йăвана вырнаçрĕç. Айта та хăйĕн ĕç вырăнне таврăнчĕ. Кил-çурта халĕ тăваттăн хуралласçĕ.

Пĕрремĕш юр ӳксе ирĕлнĕ хыççăн амăшне килĕштернĕрен-ши, икĕ çурине хамăр ялсемех илсе кайрĕç. Айта виçĕ эрне пĕр çурипе йăпанса пурăнчĕ. Ăна илме вара çырма урлă кӳршĕ ялти Сахрун Муççи тракторпах кĕрлеттерсе çитрĕ.

− Уçăп пичче, сирĕнни пек ăслă йытă таврара çук тенине илтрĕм. Çури те пур терĕç, памăн-и?

Килнĕ хăна калаçнă май хĕвĕнчен çыхă кăларса тыттарчĕ.

− Арăм хатĕрлесе пачĕ, мĕн пуррине пĕлместĕп.

Чечеклĕ хутаçра ашпа пĕçернĕ хуплу тата йывăç çинчен тин çеç татнă пек шултра, тăварланă панулми.

Муççа, мĕн хăтланатăн, йытă çурин хакĕ çавăн чухлĕ-и? Тĕнче умĕнче намăса кăларатăн.

Пахчари каюрасене пĕтернĕшĕн те вăхăтра тав тăваймарăмăр, ан кӳрен.

Тем ан калаç-ха, Муççа. Ун пек ĕçре те пулăшмасан сунарçăран мĕн усси?

Муççа тухса каяс умĕн йытта кăкартăм. Çурине илсе кайни Айтана килĕшмерĕ. Вăл нăйкăшрĕ, уларĕ, унăн тĕксĕм куçĕсенче куççуль шăрçаланчĕ. Çури хăйне евĕр илемлĕ: хӳре вĕçĕнчи çăмĕ Малти касри Хĕлип Çтаппанĕн йыттин çăмĕ пек кăтра.

Çĕрле йытă вĕрсе чăрмантармарĕ, чĕлхесĕр чĕр чунăн кулянни иртсе кайнă-ши?

Ирхине Айтана йӑвинче курмарӑм. Сӑнчӑрӗпе мӑйкӑчӗ − вырӑнтах. Питӗ меллӗ туртса кӑларнӑ вара пуҫне чӗн ункӑран. Икӗ-виҫӗ сехетрен Айта киле вӗҫтерсе ҫитрӗ, хӑй вырӑнне йышӑнчӗ. Йытӑ тупӑннипе савӑнса ӑна тутлӑ апатпа сӑйларӑм, килти ӗҫе пуҫӑнтӑм.

Кӑнтӑрла ҫитеспе пахчари ӗҫе вӗҫлесе картишне кӗнӗ чух йытӑ пӑява турткаланине куртӑм. Малти урисемпе мӑйкӑчне тӗкет. «Мӗн хӑтланать-ха ку?» − тесе ӑна сӑнама тытӑнтӑм. Йытӑ турткалашрӗ-турткалашрӗ те пуҫне мӑйкӑчран туртса кӑларчӗ, унтан алӑк айӗнчен урама тухса ҫырма хӗррипе кӳрше яла ҫул тытрӗ, кивӗ кӗпер еннелле лӑпӑстатрӗ. Эпӗ − ун хыҫҫӑн.

Кивӗ кӗпер урлӑ кӳршӗ яла ҫитме чылай ҫывӑхрах, анчах ҫынсем, ҫӗн кӗпер тунӑран, ун урлӑ ҫӳреме пӑрахнӑ. Эпӗ йытӑ хӑйӗн хыҫҫӑн йӗрленине ан систӗр тесе васкамасӑр утрӑм. Яла кӗрсен Айта тӳрех Сахрун Муҫҫин ҫурчӗ еннелле пӑрӑнчӗ Кил тӗлне ҫитсен хапха айӗнчен килкартине кӗрсе ҫухалчӗ.

Эпӗ тӳрех ӑнлантӑм: вӑл ҫурине ӗмӗртме килнӗ. Юрату туйӑмӗ чӗр чунсенче те вӑйлӑ аталаннӑ. Айта Муҫҫа илсе кайнӑ ҫурине, тен, ыттисенчен ытларах кӑмӑллать?

Йытта виҫӗ эрне хушши чӑрмантармарӑм, хӑйӗн ҫурине кайса юраттӑр, сӗт ҫитертӗр терӗм.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.